# Ҫӗнӗ ӗмӗр йыхравӗ

«Писатель пулма ҫынна чи малтан ашшӗ-амӑшӗ панӑ илемлӗх таланчӗ – сӑнарлӑ шухӑшлас пултарулӑх кирлӗ. Ку тӗрӗс. Анчах писатель вӑл тата пысӑк чунлӑ та питӗ чӑтӑмлӑ ҫын та. Художникӑн ҫынлӑхӗпе ҫирӗп чун хавалӗ, аслӑ кӑмӑлӗпе ҫивӗч ӑс-тӑнӗ (ҫав шутра сӑнарлӑ шухӑшлавӗ те) нимрен ытла унӑн кун-ҫулӗпе ӗҫӗнче хӗмленет, халӑх пурнӑҫӗпе кӗрешӗвӗнче туптанать», – палӑртнӑччӗ Геннадий Хлебников-Шанар профессор. Ҫаплах.

Калас сӑмах екки ҫыравҫӑсене тӗрлӗ ҫулпа ҫӳретет. Пӗри ав хӑй пӗлтерес тенине ятнех айвана персе уҫса парать (И. Тӑхти). Теприншӗн шухӑш таппи ынатлӑ, ҫепӗҫ лирикӑпа ҫураҫуллӑ пулни кирлӗрех (А.Артемьев). Виҫҫӗмӗшӗ хӑй калӑпланӑ сӑнарта ӳстернӗ, гротесклӑ мелсене мала кӑларать (Иван Мучи). Кашниех, апла, пурнӑҫа никамӑннипе те пӑтрашми сӑнарлӑхпа ӳкерме вӑй хурать. Лаврентий Таллеров та ҫав тӗлӗшрен хӑйне сӑпатлӑ прозаик – вӑл сӑнарланӑ пурнӑҫ яланах хире-хирӗҫле, тавлашуллӑ, ҫивӗч полемикӑллӑ енсем ҫинче никӗсленет. Ҫавна кура шухӑш вӗрилӗхӗ ӳснӗҫем ӳсет, хӗрӳ градаци таппине пӑхӑнать. Ахальтен мар хӑйӗн пӗр повеҫне «Хӗрринче» ят панӑ вӑл. Вулакан ӑнланать: кунти сӑмах пурнӑҫ хӗррине кӑларса пӑрахнӑ пӗчӗк ҫынсем ҫинчен пырать. Вӗсен, ҫав ҫынсен, хула варринче кӑна мар, хула хӗрринчи засыпушкӑсенче те пурӑнма юрамасть иккен.

Илӗпӗрин акӑ хальтерех ҫеҫ ҫапӑннӑ «Шеремет» (2003) романах. Ҫине тӑруллӑ хавхапа (пафоспа), ӳсӗмлӗ ритмпа, саманан, историн контрастлӑ енӗсем вӑйлансах, тарӑнлансах пынипе кӑтартуллӑ хайлав вӑл. Никӗсре – Шереметевсен виҫӗ ӑрӑвӗ. Асли, аслашшӗ, Илларион, совет влаҫӗнчен 18 ҫул тарса ҫӳрет. Тӳрӗ кӑмӑллӑ, таса чунлӑ пулнӑран вӑл историн трагедилле аварне лекнӗ. Совет пурнӑҫӗшӗн граждан вӑрҫинче чунне хурса ҫапӑҫни, совет идейишӗн кӑвапа таталасла ӗҫлени власть ҫыннисемшӗн шутра мар иккен. Герой хӗрлӗ террора хирӗҫ пулни, пуҫлӑхсен тӳнтерле хӑтланӑвӗсене сивлени ун пурнӑҫне йӑлтах кутӑнла ҫаврать, героя «шеремете» кӑларать. Ахальтен мар романра ухмахлӑх проблеми мала тухать. Чӑн айванӗсем, ухмахӗсем вара шереметсем мар иккен-ха, власть управҫисем пулнине туйса илет вулакан. Вӑталӑххин те (ывӑлӗн), Еремейӗн, шӑпи сулӑнкӑна кайнӑ: нимӗҫ лагерӗнчен тарса хамӑрӑннисем патне ҫитнӗ этеме НКВД ӗҫченӗсем допрос тӑваҫҫӗ, штрафбата ӑсатаҫҫӗ. Фашистсен тыткӑнӗнчен хӑтӑлни вӗсемшӗн этем лазутчик пулнипе пӗрешкелех имӗш. Кӗҫӗннин (мӑнукӗн), Ардалионӑн, кун-ҫулӗ те синкерлӗ – ӑна, усламҫа, укҫашӑн хыпӑнакан чарлака рекетирсем тӗп тӑваҫҫӗ. Хайлавра уйрӑм ҫынпа истори тапӑҫӑвӗ мала ӳкет, совет саманипе тӳрӗ кӑмӑллӑ этем тупӑшӑвӗ тӗпе килет. Ҫавна пула тавлашуллӑ диалогсен таппи вӑй илет, тӗрлӗ геройсен контрастлӑ сӑнланӑвӗ мала тухать.

«Шавласа ҫулҫӑ тӑканать» хайлавра (1990) писатель ӗлӗк парти ӗҫӗнче тӑнӑ Кургузовпа Дроздов сӑнарӗсем урлӑ вӗсем утса тухнӑ ҫулӑн тӗлсӗрлӗхне, пуҫлӑхсен ӗҫӗн пӑрӑнӑҫне кӑтартса парать. Акӑ «Эрхип мӑнукӗ Эрхип» повесть (1990). Кунта та сюжет геройсен икӗ ушкӑнӗ хирӗҫленнинче тымарланать. Пӗр енче – влаҫра тӑракансем валли ятарласа уҫнӑ боль-

ницăра «канакан» пуçлăхсем. Чĕлхи çинче вĕсен вĕçĕмех – «совет», «парти», «политика», «истори» сăмахсем. Хăйсем кунĕн-çĕрĕнех пуш сăмах вĕтеççĕ, демагоги арманĕ авăртаççĕ. Тепĕр енче – «пĕчĕк çынсем», вĕсен тертлĕ пурнăçĕ. Ку геройсен нуши-хури расна. Амук ятлă санитарка, çапла, вĕçĕмех укçа çитменнипе аптăрать, ачи-пăчине мĕнле тумлантарасса, мĕнле тăрантарасса пĕлмест, ячĕ те кăсăк ун, полемикăлла ят. Хăйне ăсла хывнă ашшĕ ăна, географ пулнăран, Амазонка ят хунă-мĕн. Çавăнпах пуль героиня кăкăр сурнипе (урăхла каласан, чун ыратнипе) аптăрать. Мăшкăллă ята кăмăлламасăр вăл ăна Амук тесе кĕскетсе хунă. Ку ĕнтĕ «пĕчĕк çын» тенĕ геройăн шалти, чунĕнчи хире-хирĕçлĕхĕ, тавлашулăхĕ.

«Пĕчĕк çеç путене» повеçри Тимуш та çавнашкал сăпатлă персонаж. Сăнĕпе тĕксĕм вăл, пĕвĕпе лутра, анчах чунĕпе тĕлĕнмелле пуян. Автор шучĕпе, çакăн сăлтавĕ – Тимуш куршак-чÿлмек ăсти пулнинче. Амук пекех Тимуш та психологи енчен туллин сăнарланнă. «Пысăк тĕнчери пĕр пĕчĕк чун» калаври Аннушкин художник сăнарĕ те хитре чун-чĕреллĕ персонаж. Тĕлĕнмелле талантлă картинăсем ÿкерет. Хăй вара çынсем хушшинче çав тери сăпайлă та лăпкă этем. «Чăн-чăн философла шухăшлать Аннушкин çут çанталăка çăлăнăç та, вилĕм те кÿме пултаракан этем тивĕçĕ çинчен. Л.Таллеров калавĕ – чăваш прозинчи философилле туртăмăн курăмлă палăрăмĕ», – çырнăччĕ Ю.Артемьев профессор 30 çул каяллах. Антитеза мелĕ, апла пулсан, геройсен хире-хирĕçлĕхĕ çинче çеç никĕсленмест. Унта этем характерĕн философиллĕ енĕсем контрастлăн сăнланни те уçăмлă. Çакна пула писатель çырнисенче публицистика шухăшлавĕ тĕпе тухать. ·

Писатель стилĕн кунашкал туртăмĕ герой мĕнле лару-тăрура палăрнине тимлĕ сăнама хушать. Хăйхи антитеза мелĕ тата ытларах вăйланать. Амук тавралли лару-тăру, сăмахран, ялан килти хирĕçÿсемпе, хăй пекех мĕскĕн шăпаллă Мĕтрипе çумлă пулнинче курăнать. «Лаша касанĕнчи» (1988) Сергей Сергеевич – чухçă сексот пулнă, çумри мăшăрне пуçилене ăсатнă. Ун сăнарне калăплама Лаврентий Таллеров санаторисемпе лăк тулса ларнă хула кирлине ăнкарать. Герой кашни эрнерех таврари пур санаторинче те ташласа çаврăнать. Паллă, ку – вĕлтĕркке чунлă этем. Ун тавралли çынсем те «ташăçăсем», вĕтĕр-шакăр шухăшлă этемсем, Сталина мухтакансем, историн кризислă енĕсене вăй парса тăракансем, культ тапхăрне сĕтеклентернĕ сăнарсем.

Истори аталанăвне, самана хушшине урмăштарнă геройсем те пĕчĕк çынсем пекех характер тĕлĕшĕнчен контрастлă. Сергей Сергеевичах ав – хура ăш-чиклĕ, пăрнăç ĕмĕтлĕ, анчах çиелтен пăхма – япшар, таса тумланать, модăран юлмасть. Ак тата «Пурнас килсен» (1990) повеçри Çтаппан Омежников. Сăнпа самай муталанчăк вăл – тумтирĕ тирпейсĕр, чунчĕрипе те çавнашкалах – пĕр çынна та хисеплемест, хăйне пысăка хурать, пĕтĕм тĕнчене кураймасть. Апла пулин те алли-ури ялан çыпăçуллă ун. Çынсем кăларса пăрахнă тимĕр-тăмăртанах, йывăç-кирпĕчренех темĕн те ăсталать. Пĕрех çемье пурнăçĕ ăнăçмасть ун – арăмĕ те, ачисем те пăрахса кайнă ăна.

Кун пек сăнланнă геройăн портрет паллисем кирек хăш хайлавра та сюжет тăршшĕпех тăтăш уçăлса пыраççĕ. Çтаппанах ав – каласа паракан герой журналиста вăл малтанласа юхăннă çын евĕрлĕрех курăнать. Майĕпен çиеле сăнарăн чурăс кăмăлĕ тухать. Вăл гротесклăнса пырать,

градаци еккине парăнать. Сюжетăн кунашкал юхăмĕнче авторăн кулăшĕ аван курăнать: пĕчĕк çынсене сăнланă чух çыравçă литота мелне кăмăллать, герой тыткаларăшне юри пĕчĕклетсе кăтартать, тӳнтер сăпатлă персонажсен сăн-сăпатне, характер енĕсене ятнех ӳстерсе сăнарлать. «Майра» романах илес хăть (2006). Пысăк вырăна кĕрес шутпа Икасов тенĕ этем тивĕçлĕ органсене ашшĕ пирки çăхавлă хут ярать иккен. Ывăлĕ те çапларах ун – ашшĕне таварас тесе ятарласа çĕтĕк-çурăк тумтирпе çӳре пуçлать, виле пытаракансен кантурĕнче ĕçлеме тытăнать...

Лаврентий Васильевич Таллеров 1929 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Нĕркеçре çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан Тутарстан Республикинче библиотека техникумĕ пĕтерет, райхаçат редакцине ертсе пырать. Каярах ăна республика хаçатне – «Коммунизм ялавне» – чĕнсе илеççĕ, вăхăчĕпе «Тăван Атăл» журнал редакторне лартаççĕ.

Çырасса Лаврентий Таллеров пĕчĕк калавсенчен, очеркла тĕрленчĕксенчен пуçăнать («Хурăн шывĕ», 1975). 1970-80 çулсенче прозаик хуçалăха ертсе пырас ыйтусемпе, производство проблемисемпе кăсăкланать. «Юхать юхан шыв» повеçре вăл ферма ĕçченĕсен ĕçне-хĕлне сăнать. «Сăпка юрринче» строительсен нушисене тĕпчет. 80-мĕшсен иккĕмĕш çурринчен пуçласа вара влаçăн политикăлла хĕсĕклĕхне, историн трагедиллĕ таппине килĕштерме пуçлать. Ку яхăнтан пуçласа вара пĕчĕк çын сăнарĕ те самай анлăланать, вăл самана хушшин синкерлĕ ытамне лекет. Çакă та кăтартуллă: истори аталанăвĕн синкерлĕ сулăмĕсене тĕпчени писателе проза эпикăлăхĕн çулĕ çине илсе тухать. Час-часах (1990-2000 çç.) романсем çапăна пуçлаççĕ çыравçăн: «Çăлтăр витĕр çул курăнать», «Шеремет», «Майра». Асăннă малтанхи романсенче прозаик юнпа пĕвеннĕ вунă çуллăхсен сăнарне калăплать (революци, пĕрремĕш тĕнче вăрçи тата ыт.те). «Шереметри» лару-тăру çитмĕл çула тăсăлнă тапхăра ытамлать. Пур романра та историллĕ катастрофа тĕпе килет: этеме вăл кил сăпкинчен кăларса ывăтать, пиншер çухрăм тăршшĕне çула ăсатать, унăн кун-çулне аркатать...

Вуншар çул хаçат-журнал ĕçĕнче вăй хунă çыравçă халăх писателĕн хисеплĕ ятне тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл çĕнĕ ĕмĕрте те алă усса лармасть. Иртнĕ çичĕ-сакăр çул хушшинче кăна пĕр романпа çичĕ повесть хайларĕ. А.П.Чехов традицийĕсене ăша хывнăран ку тапхăрта автобиографиллĕ жанрсем патне туртăнчĕ. Пулас хайлавра, вырăссен аслă прозаикĕнни пекех, Раççейĕн политикăллă историне çĕнĕлле пăхасси мала тухасса çирĕп ĕненет.

**Г. И. ФЕДОРОВ,**
**филологи ăслăлăхĕсен докторĕ,**
**ЧР Патшалăх премийĕн лауреачĕ**

**РЕДАКЦИРЕН:**

**«Хресчен сасси» Издательство çурчĕн туслă та хастар йышĕ «Тăван Атăл» журналăн юратнă тусне, Чăваш халăх писательне Лаврентий Васильевич Таллерова çуралнăранпа 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлать. Пурнăçра телей, ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хăват, вăрăм кун-çул, пултарулăх ĕçĕнче ăнăçу тата çĕнĕ çитĕнӳсем сунать.**